

**Диктант сăн-сăпачĕ**

2015 çултанпа диктантăн сăн-сăпачĕ пур. «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2022» акци сăн-сăпачĕ пулма «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурсăн «Чи лайăх арçын ролĕ» номинаци çĕнтерӳçине **Евгений Урдюков** пултаруллă артиста çирĕплетнĕ.

Маларах диктант сăн-сăпачĕ пулма çак хастарсем тивĕçлĕ пулнăччĕ:

2015 çулта – **Алиса Чайникова (Ахахпи)**, "Чăваш пики - 2013" конкурс çĕнтерӳçи, паллă юрăçă;

2016 çулта – **Ольга Элиме**, шкултан медальпе вĕренсе тухнă, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ, "Тăван радио" редакторĕ;

2017 çулта - **Мария Самделова**, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студентки, «Патăрьел чăваш пики – 2013» конкурс çĕнтерӳçи, «Регионсен чăваш пики – 2015», «Раççей чăваш пики – 2016» конкурссен финалистки, «Çулталăк моделĕ – 2016» титула çĕнсе илнĕ пике, Наци радиовĕн дикторĕ;

2018 çулта - **Александра Прокопьева**, культура эткерлĕхĕн, экологи тата пурнăç хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсемпе иртнĕ Пĕтĕм Раççейри «ЮНЭКО» çамрăксен форумĕнче I степеньлĕ Диплома тата «Студентсен чи лайăх ăслăлăх ĕçĕ» медале тивĕçнĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студентки;

2019 çулта акци сăн-сăпачĕ пулма **Алексей Александров** («Сантăр Элтиярĕ») Чăваш наци радиовĕн редакторне çирĕплетнĕ. Мĕн ачаран чăваш халăхĕн эткерĕпе кăсăкланнă. Халĕ ăна Чăваш Ен наци радиовĕнче "Сантăр Элтиярĕ" ятпа пĕлеççĕ. Вăл "Эткер", "Ылтăнран хаклă", "Пĕр кăкран" тата "Кала-ха" кăларăмсен ярăмĕсене йĕркелесе пырать;

2020 çулта «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акци сăн-сăпачĕ пулма И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш тата вырăс филологи факультечĕн 4-мĕш курс студенткине **Екатерина Силеровăна** çирĕплетнĕ;

2021 çулта акци сăн-сăпачĕ пулма Интернетри хутшăну тетелĕсенче чăвашла страницăсем йĕркелесе тытса пыракан **Константин Доброхотов** блогера шаннă.

* * *





















**Урдюков Евгений Васильевич**

Е.В. Урдюков 1989 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикин Шăмăршă районĕн Анат Чаткас ялĕнче çуралнă.

Ялти вăтам пĕлӳ паракан шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕн актер ăсталăхĕн факультетне тӳрех иккĕмĕш курса вĕренме кĕрет. 2011 çулта алла диплом илсен К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрне ĕçлеме вырнаçать.

Евгений Урдюков калăплакан сăнарсем витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ пулса тухаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ артист театрта иртекен конкурссенче «Чи лайăх арçын сăнарне калăплакан» номинацинче темиçе хут та çĕнтернĕ. 2011 çулта Митяй сăнарне (Л. Сачковăн «Пĕртен-пĕрскерĕм»); 2013 çулта – Мисаил сăнарне (А. Тарасовăн «Мунча кунĕ»); 2017 çулта – Пахмат сăнарне (Ю. Григорьевпа В. Николаев «Эс ман чунра (Пихампар чунĕ – манра)»); 2018 çулта – Роман сăнарне (Н. Мартыновăн «Çил-тăвăллă каç» (инсценировкине Г. Медведев хатĕрленĕ); 2022 çулта – Бичуринăн çамрăк чухнехи сăнарне (М. Сунталăн «Эп сӳннĕ чух – эс çун!») чаплă выляса кăтартнă.

2014 çулта Мисаил сăнарне калăпланăшăн республикăра иртекен «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурсăн жюри Евгений Урдюкова «Çулталăк дебючĕ» тесе палăртнă. Артист 2014 çулта Оренбург хулинче иртнĕ Атăлçи федераллă округĕн театрсен пĕрремĕш фестивальне хутшăннă. 2016 çулта Республикăри актерсемпе режиссер ĕçĕсен «Хаклă ĕмĕт» конкурсĕнче «Ах, ку юрату!...» сценкăри сăнара ăста вылянишĕн хисепе тивĕçнĕ. 2017 çулта республикăри чăвашла проза произведенийĕсене пăхмасăр калакансен «Чĕрĕ сăмах» конкурсĕнче комисси эксперчĕ пулнă.

2021 çулта Сăрпа Хусан хӳтĕлев чиккисене тума хутшăннă çынсен ĕç паттăрлăхне халалланă «Кунта тăшман ури пусмасть» (Сюда не ступит нога врага) документаллă илемлĕ фильмра ӳкерĕннĕ.

2022 çулта Чăваш Республикин театр искусствин XXII конкурсĕнче «Чи лайăх арçын ролĕ» номинаци çĕнтерӳçи.

